# «Вĕр, ҫилĕм, ҫула май!»

Чăваш наци библиотекинче Валентина Масловăн аслăлăх ĕҫĕсен тата литература произведенийĕсен «Вĕр, ҫилĕм, ҫула май!» куравĕ уҫăлнă.

Валентина Ивановна – психологи наукисен кандидачĕ, Раҫҫей патшалăх социаллă университечĕн Шупашкарти филиалĕн психологипе педагогика кафедрин доценчĕ, Раҫҫей Писательсен союзĕн членĕ, наука 160 статйин, 500 картина авторĕ. Вăл Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Ураково ялĕнче ҫуралса ӳснĕ.

Валентина Маслова Чăваш Ен тата Раҫҫей Художникĕсен союзĕсен выставкисене тăтăшах хутшăнать. Сăрă ăстин пултарулăхĕ культурăпа чĕмлĕхе (духовноҫа), сисĕм-туйăма ӳстереҫҫĕ, япăх кăмăла ирттереҫҫĕ, пултарулăха аталантарма хавхалантараҫҫĕ. Пĕтĕмлетсе каласан – унăн ĕҫĕсем чуна сиплеҫҫĕ.

«Тĕнчене юратса йышăн» кĕнеке выставкинче вара авторăн психологипе ҫырнă тĕпчев ĕҫĕсемпе, сăввисемпе паллашма пулать.

Р.АНАТОЛЬЕВА.